29-188

АЂА-ПĂЂА КĔНЕКИ

Ç. ЙАККĂВЛĔВ (ЙАЛАВИН)

# КАВРУÇ

## (КАЛАВ)

ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
Шупашкар—1929

Ç. ЙАККĂВЛĔВ (ЙАЛАВИН)

# КАВРУÇ

(КАЛАВ)

Аҫапăҫа ваҫҫи çырнă илемлĕ литтературă ăмăртăвĕнҫе виççĕмĕш парне (преми) илнĕ

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР
Абонем. экз. № 25.

ҪĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
ШУПАШКАР—1929

Отпечатано в Типографии школы Ф. З. У
Чувашлит № 1124
Заказ № 203.
Напеч. 3000 экз.

# КАВРУÇ.

(КАЛАВ).

I

— Ех—анне мана йуратаť-çке! Ман анне пуринђен те аван—тесе мухтанаť Шаклапуç-Кавруç ытти ађасем хушшинђе.

Паллах ĕнтĕ кирек кама та хăй ашшĕ-амăшĕ пуринђен аван, пуринђен ырă пек туйăнаť. Анђах, тўррипе каласан, Кавруç амăшĕ—Праски пек ăслă, йĕркеллĕ хĕрарăм пĕтĕм йалĕпе те тупма çук.

— Шăкăлђи кайăксем пек пурнаççĕ, хурлама çук—теççĕ вара йалти çынсем Кавруç ашшĕпе-амăшĕ пурăнни çинђен.

Тăхăр çул ытла ĕнтĕ вĕсем пĕрле пурăнма пуçлани, çапах та вĕсем çапăçни-харкашни çинђен сас-ђĕвĕ илтĕнмест, пĕр-пĕринпе пит килĕштерсе пурнаççĕ.

Пурнăç аван пыраť те, ађисем çамрăк. Кавруç çиђђĕ тултарса саккăра çеç пуснă. Вирук—ун йăмăкĕ—пиллĕк те тултарайман-ха. Кавруçран асли (Саңук йатлăђђĕ) пĕр çула çитиђђенех кăсамăк ђирĕпе вилсе кайрĕ. Ађа ђухне

темле ђир те çакланаť вĕт вăл, çитменне тата пирĕн ђăваш, ђир-ђĕр лексен вара пуљнитсана илсе кайас вырăнне тĕрлĕ ним пĕлмен йумăçсем патне çӳресе ытларах сийен кураť. Ђăнахах та вара, хут вĕренмен йумăç карђăксем, хăйсем те сывмарскерсем çын ђирĕ çинђен ăçтан пĕлђђĕр-ха? Ťĕттĕм, хăйсем пекех хут вĕренмен çынсене улталаса пурăнаççĕ. Ђир-ђĕр лексенех пуљнитсана тухтăр, йе хвершăл патне кайас пулаť, вĕсем тĕрлĕ ђире йепле сывлатмалли çинђен кĕнекесем тăрăх ăста вĕреннĕ.

Саңука та тухтăра кăтартнă пулсан, сывалнă та пулĕђђĕи тен? Капла ĕнтĕ çамрăклах, пурăнса курмасăрах, вилсе кайрĕ.

Кавруç курман та ăна, амăшĕ каланинђен çеç пĕлет, пит шеллет ăна Кавруç.

— Ђипер ӳснĕ пулсан унпа иксĕмĕр выљанă пулăттăмăрђђĕ—тет вара вăл ăна аса илнĕ вăхăтра.

Çулла хĕртсе хĕвел пăхнă ђух, урамра йе çаран çинђе, йешĕл курăк çинђе выљани темрен те аван. Çара уран, йӳле пилĕк, картуссăрах Кавруç ирхине ирех тухаť те, тĕттĕм пулиђђен, урамра хăй йулташĕсемпе ырмиканми выљаса çӳрет. Тусĕсем сахал мар унăн, çитмелле. Пуринђен ытла кӳршĕ (пускиљ)

ађине — Çумука — йуратаť, пĕрмайах çавăнпа çӳреççĕ, йăваш вăл, Куçма Вађукĕ пек усал мар, çапăçмасť. Вађук вара выљама тытăнсанах, хирĕçме, çапăçма тытăнаť. Йуратмаççĕ ăна, çавăнпа урамра, никам та выљасшăн мар унпала.

— Усал ан пул ӳлĕмрен, çапла кирлĕ!

Çапах та хăш ђух пырса çулăхаť-çулăхатех. Пĕђђен нийепле выљама аптăраť пулмалла.

— Çапăçмасан выљама йышăнатпăр — теççĕ вара ытти ађасем вăл вĕсен патне пырсан.
— Çапăçмăна?

— Çук тимĕп, аван выљăпăр — тет вара вăл.

Выљама йышăнаççĕ, анђах Вађук хăй сăмахне ђас манаť. Усал ĕнтĕ, мĕн калăн!

Кавруç та çавăнпах йуратмасť ăна, ытти ађасемпе, хăй тусĕсемпе выљаť.

Мĕнле кăна вăйă шухăшласа кăлармаççĕ, пулĕ? темĕн те пур унта; лашалла выљаççĕ, тыр вырмалла, (тырă тесе курăка вырса типĕтеççĕ), ĕçкĕ-çикĕ вăййи... шутласа та кăларас çук. Сирĕн йалта та, çулла ађасем вăй-выљăççĕ пуљ? Пĕђĕк ђухне епĕ хам та, пит йурататтăм выљама.

Çӳресен-çӳресен ăшăпа тарлатăн. Шыва кайса кĕретĕн те. Ех аван çке! Ђуна уçсах йараť.

Кавруççен хыçăнђех пĕр пĕђĕк çырма пур, хаљ те пĕвесе хунă, çавăнпа шыв пухăннă. Тарăн мар унта, Кавруçа кăвапа таран кăна. Пĕр тĕлтен йухса выртнипе, шывĕ тăрă, хăш ђух выљăх тавраш кĕрсен çеç пăтратса хăварать, кайран йухса татах тăрăлать.

Еретлĕ ларса апат çиме те вăхăт çук Кавруçăн. Ђас-ђасах, пÿрте кĕмесĕрех, ђÿређе патне ђупса пырать те:

— Анне-е-е! çăкăр касса парха мана, çийес килеђĕ-ĕ-ĕ! тесе кăшкăрать, хăйĕн шăнкăрав пек, çинçе сассипе.

— Ăçта ес пайан кунĕпех ђупса çÿретĕн, кĕр пÿрте, кĕрсе, ларса çи, ура çинђен ăша кĕмест, усси çук — тет вара ăна амăшĕ. —Кĕр! памас-тăп ђÿређерен! — Вăхăт çук, анне, тата кăшт çеç выљатăп, пар ђасрах — тархаслать Кавруç.

Çăкăрпа паранкăи унта, йе ђăкăт илет те вĕçтерет йулташĕсем патне. Кайарахпа амăшĕ ăна пÿрте кĕрсе апат çиме вĕрентрĕ. Ђăнах та çав, урамра тусан, çăкăр çине те ларать, çăкăр вараланать, пÿртре çинине çитес çук. Кавруç ăна хаљ аван пĕлет.

Апат хыççăн татах вăйă, ывăну, кану та çук. Пĕр-пĕринђен уйрăлаймасăр. хăш ђух вара пит каçа йулаççĕ.

— Ман Кавруçа курмани есĕр? — тесе ыйтса çӳрет ун пек ђух, унăн амăшĕ, хирĕç пулнă сынсенђен.

— Хаљ кăна Миттасемпе кунта выљаса çӳређђĕç!

— Е-ей ку ађапђасемпе-е, таçта, мура, кайса çухалђĕç --- тесе мăкăртатса çӳрет вара амăшĕ.

Акă çав вăхăтрах Çумуксен картишĕнђен пĕр кĕтӳ кĕпĕрленсе ђупса тухаççĕ.

— Таврăн ђасрах Кавруç, ђас пул, аçу такçанах килђĕ, апат çимелле! — тесе çавăтса кайат ăна амăшĕ. — Питне ăçта хуратрăн?

— Хура марçке ман пит!

— Хура мар сана, хуп-хура. Çу питне авантарах.

Выљаса ывăннă хыççăн апат пит тутлă. Паранкă та тем тути калат.

— Хытăрах çи, ђасрах ӳс, мана пулăшакан пулăн — тесе хистет ăна ашшĕ. — Саңук пурнаймарĕ, хаљђен пулăшнă пулĕђђĕ мана. Ну кил кунтарах, лар ман çумма.

Ашшĕн кăтра сухалĕ унăн питне кăтăклантарат. Сарă сухаллă унăн ашшĕ. Çӳçĕсем кăшт хурарах курнаççĕ. Çу сĕрнипе пуђ. Куймак çинĕ ђух, çуллă аллипе йалан пуçне сăтăрат.

çӳçӗсем çап çутă курăнаççӗ вара, кӗленђе пек йакалса кайаť пуçӗ.

Кавруç пуçне амăшӗ сӗртермест, çавăнпа ун çӳçӗсем кăлкан пек шурă. Çилпе „вӗл-вӗл“ вӗçеççӗ вара. Амăшӗ ăна ытти ађасен хушшинђе çӳçӗнђенех таçтан паллаť.

— Каласа парха, мӗн турăн пайан ес? — хускатса йараť ашшӗ апат хыççăн.

Кавруç мӗн-мӗн тунине каласа параť.

— Çынсемпе ан çапăç, ваттисене ан мăшкăла, йурамасť — тесе ăс параť ăна ашшӗ.

— Куçма Ваңукӗ усал, вăл çапсан ман пăхса тăмаллаим?

— Ес унпа ан выља, урăххисемпе выља. Сан тусу камха? сасартăк ыйтаť унтан ашшӗ.

— Çумук ман йуратнă тус.

— Ну, ну йурӗ, выђăр çавăнпала. Вăрмана кайса ан çӳре, аташса кайсан, кашкăрсем тытса çийӗç.

— Çук, каймастăп епӗ унта... Пăшал илсе паратни? сасартăк аса илет Кавруç.

— Ма сана пăшал?

— Кайăк тытма.

— Кам вӗрентрӗ сана? Çамрăкха есӗ, пӗлместӗн. Ӳссен иксӗмӗр çӳрӗпӗр пушă вăхăтра, ухутана... Ну кай çывăр, манăн та, ӗçе тирпей-

лесен çывăрмалла. Ыран ирех сухана. Пыратни манпа сухана?

— Пырап... Ху илсе каймастăн та — ўпкелешет Кавруç.

— Илсе кайăпха, пырăн, ўс пăртак, тет те сакă çинђен урайне йарса, хăй лашине çиме пама тухаť. Вăл ёç пуçтарса кёнĕ çĕре Кавруç тутлă ăйхăпа çывăраť.

Ирхине тăрсан куçĕсене йăвалакалаť те тўрех:

— Атте ăçта, ăçта кайрĕ татах? — тесе ыйтаť амăшĕнђен.

— Çăвăн та, апат çи малтан... Аçу сухана кайрĕ, ăçта кайрĕ пулаги?, сухана кайрĕ — тавăрса калаť амăшĕ, кăмака панђе турђăкасемпе, ђўлмексемпе кĕмсĕртетсе.

— Мана ма тăратмарă-ăр! — нăшăклатма тытăнаť Кавруç, аллисемпе, куçнė йăвалакаласа. — Ĕпĕ те кайасшăнђђĕ, хăй те илсе кайап терĕ-ĕ!..

— Тăратрăмăр сана. Ан сĕркеле куçна, таса мар аллусемпе куçу пăсăлĕ, тет амăшĕ.

Тĕрĕсне те тĕрĕс çав, ашшĕ ăна вăратрĕ, анђах Кавруç тепĕр йенне çаврăнса выртрĕ те, çавăнтах ăшă ăйăхпа çывăрса кайрĕ.

Çапах та пĕрре ашшĕ ăна ирхине ирех вăраткаласа хăйпе пĕрле хире, сухана илсе кайрĕ.

— Нно! на-а! — хăрах тилкепинҫен турткаласа пырат̆ Кавруç савăннипе! На-а! ут хытăрах. Лаши суха туса ĕшеннĕ — пит васкамаст̆. Пуçне уснă та йе-е-рипен утса пырат̆.

— Уттар авантарах, хăвала лашуна, ма итлемест-ха вăл сана — текелесе пырат̆ ашшĕ.

— Пушăпа çап, çап пушăпа!

Кавруç пĕрре хăйсен лашине çапат̆, тепре пиҫевре кăкарнă Макар лашине çапкалат̆, анҫах Кавруç çапни вĕсене нимĕн те мар, шăна-пăван çыртни ҫухлĕ те çук пулас, хӳрине çеç сулкаласа илеççĕ.

Ашшĕ унтан тилкепине илҫĕ те, лашисем ăна сиссенех васкаса утма тытăнҫĕç.

Кавруç урапа çинҫе йĕри-тавра пăхкаласа пырат̆. Темиçе çухрăм пулĕ хир тап-таса. Таçти инçетри йапаласем курăнса выртаççĕ.

— Атте мĕн вăл а-а-в лере инçетре ҫăпар курăнат̆? — тесе тăсса кăтартат̆ Кавруç.

— Кĕтӳ вĕт вăл, çавна паллаймастни?

— Ма вак вара, ĕнесем? — тĕлĕнет Кавруç.

— Инçетрен çапла курăнат̆ вăл, айван, — тет ăна ашшĕ. — Ну çитрĕмĕр ана çине, — терĕ вăл кун хыççăн. Тăпру-у-у! стат̆! — туртса ҫарҫĕ вăл лашине.

Тахшĕ вăхăтра урапаран тăварнă лашасене,

тахшӗ вӑхӑтра плукӑ кӳлнӗ ашшӗ — Кавруç сисмен те. Ана çинђен пӗр икӗ хут кӑна йешӗл çул çине ђупса кайса килђӗ. Лашасем хатӗр.

— Ну айта! — терӗ ашшӗ тилкепине аллине илсе. Те лашана каларӗ, те Кавруçа. Лашасем хӑйсен майӗпе хускалђӗç.

Кавруç хура, нӳрлӗ тӑпра ашса плук авринђен тытса пырат̆. Вӑл урине йарса пуссанах плук каснӑ çӗр пайӑрки ун ури çине килсе пусат̆. Малтан хӑнӑхиђђен пӗр-иккӗ ӳкрӗ те, кайран хӑнӑхрӗ, плукран кайарах йулса, сыхланса пыма вӗренђӗ. Ун хыççӑн, прусна тӑрӑх пӗр вӗçсе, пӗр тӑрса хура кураксем пыраççӗ анђах Кавруç хаљиђђен курман вӗсене, пӗлмест, çавӑнпа ашшӗнђен ыйтат̆. Çерçийе пӗлет вӑл, шӑнкӑрђа, ђӗкеçе, ђанана тата ыттисене те пӗлет, кӑсене курман хаљђен.

— Мӗн шыраççӗ вӗсем атте? — ыйтат̆ ашшӗнђен пӳрнипе тӑсса кӑтартса.

— Е-е! хура кураксеми? Хурт-кӑпшанкӑ шыраççӗ вӗсем — тет ашшӗ. — Плук хуртсене çавӑрса кӑларат̆ те, вӗсем суйласа пыраççӗ.

— Ай-йай пысӑк, атте, пирӗн автанран та пысӑкрах — калаçкаса пырат̆ Кавруç.

— Ех, çамрӑк çавха, çамрӑк, нимӗн те пӗлместӗнха Кавруç.

Ашшӗ плукне тасатма лашасене ҫарсан. Кавруҫ ахаљ тӑриҫҫен ҫав хура-куракеене хӑвалама тытӑнаť.

— Кӑшш-кша-а, кӑш — ывӑтса перет вӑл вӗсене тӑпра муклашкипе. Анҫах лешсем питех хӑрамаҫҫӗ, пӑртак вӗҫен пек тӑваҫҫӗ те, татах пырса лараҫҫӗ.

Ывӑниҫҫен ҫӳрерӗ Кавруҫ плук хыҫҫӑн.

Кӑнтӑрла ҫитерехпе ывӑнса ҫитрӗ, сахӑрпа ҫӑкӑр ҫикелерӗ те сӑкманне айне сарса выртса ҫывӑрҫӗ. Нумай ҫывӑрни, сахал ҫывӑрни ӗнтӗ, астумасť, пит хытӑ ҫывӑрнӑ.

— Ей, киле кайма вӑхӑт ҫитрӗ! Тӑр ҫасрах Кавруҫ! — илтет вӑл сасӑ.

Сиксе тӑҫӗ, пӑхкалаť. Шӑлне ҫыртсан тусан, хӑйӑр ҫӑтӑртатаť — ҫывӑрнӑ вӑхӑтра ҫилпе кӗнӗ, куҫне те йӑмӑхтараť. Ашшӗ лаша кӳлсе хунӑ, Кавруҫ урапа ҫине улӑхса ларҫӗ.

— Ну куртӑни суха тунине?

— Куртӑм.

— Ыран тата килетни?

— Килеп.

— Нноо!, айта уттара пар!!! — хускатса йаҫӗ лашасене ашшӗ. Килелле май пит васкаҫҫӗ лашасем. Кавруҫ урапа ҫинҫе ӑҫта аванне

шухăшласа пыраť. Ђăнах та вара, таçта авантарах, те йалта, те хирте? Йалта — ађасемпе выђасси йулаť, хирте те аван. Пĕлмест Кавруç ăçта аванне. „Çумука та илсе кайас хире, вăт выђăпăр вара унпалла“ — шухăшлаť вăл. Урапа çинђе силленсе пырса, татах ăйхă пусрĕ Йала çитерехпе Кавруç çывăрса кăйнă...

— Ну сухаçă, кĕр ђасрах апат çиме! — вăраťаť ăна амăшĕ — тăр. Тăпра çирĕним мĕн есĕ? — кулкалаť вăл, Кавруçа урапа çинђен антарса, — çăварĕ хуп-хура.

— Хирте çапла вăл, тусан пусаť унта — тавăрса калаť уншăн ашшĕ.

Килне кĕмесĕрех ђупрĕ Кавруç шыва кĕме — шăрăх ђăтма çук. Ађасем пурте çырма хĕринђе, шавлаççĕ, шывра ђапăлтатаççĕ. Кавруç „сухана кайни çинђен“ каласа мухтанаť,

— Мана атте сухана илсе кайрĕ!

— Ун пек епĕ те кайнăçке — тавăрса калаť Миťťа. Шыва кĕрсе тухсанах апат çиме ђупрĕ Кавруç, — хырăмĕ выçнă.

## II

Вăхăт иртет вăл çаплах. Тыр вырас вăхăт та çитрĕ. Кавруçа кашни кунах хире илсе çӳреççĕ — Вирука астăвакан çук, амăшĕн тырă

вырмалла. Хаљ тем пек киле йулĕђђĕ Кавруç, анђах хăвармаççĕ. Вирукĕ те темме йĕрет, пĕр хускалсан ђарма çук.

Ашшĕ апла пулакан марђђĕ, темме салхулланђĕ, хуйхăрма пуçларĕ. Амăшĕ те пуçне ђикнĕ, пит салхуллă.

— Тырă пит нађар—тесе лаш хуйхăрат ашшĕ. Пĕлтĕр те нађар пулђĕ, кăçал нимех те çук, анинђе пĕр урапа та пухăнас çук.

— Хĕл каçса пулмасť кăçал—тет амăшĕ—ĕлĕкхи хатĕр çук. Выçă вилетпĕр пуљ.

Кавруç ăна-кăна пĕлмест, тепле пулсан аван вара тырă? Пĕтĕм хир тырă, ашшĕ çапах та çук, тет.

Çӳлте, таçта пĕлĕт çинђе тĕрлĕ вĕçен кайăксем йурлаççĕ.

— Тăр-тăр тăри-и! Тăр-тăри-и пĕр ђарăнмасăр савăнаççĕ тăрисем. Вĕсем те Кавруç пекех, тырă нађар пулнине мĕнне пĕлмеççĕ—вĕсемшĕн пур, çиме çитет. Хирти тăмана çунатне тем пысăкăш сарса йарăнса вĕççе çӳрет. Кавруç ăна аллине куçхарши çине хурса пăхаť—хĕвел çути пăхма памасť, куçа йăмăхтарса кансĕрлет.

Темшĕн ĕсĕклесе йĕрсе ларать Вирукĕ. Кавруç тĕрлĕ майпа йăпататť ăна, —çук ђарăнмасť.

Апат çиме ларђёç. Унта та çав сăмах — тырă нађарри ђёрене çунтараť.

— Çуртăри тырри те йёркеллĕ мар исмассин — тесе хускатса йараť ашшĕ — унта та мăйан çеç шăтса тулнă.

— Ђăнах та çав, кăçалхи тыррăн ёређĕ çук-- пит нађар. Пĕлтĕр сĕлли аван пулнăђђĕ, кăçал вăл та нађар. Сĕлĕ пулсан кĕселпе пурăнма пулаť.

Каç киле таврăнсан та çав хуйхă. Çиме пурха, Каврус çăмха пек сиккелесе кăна çӳрет: Кĕркунне тырăсене пуçтарсан шкула çӳреме пуçларĕ.

— Кам ађи есĕ? — тесе ыйтаť унтан уђитлĕ, шатраллă, сарă, уççăн калаçаканскер.

— Атте ађи — таврса калаť Кавруç. Уђитлĕ ахăлтатса кулса йаđĕ.

— Аçу мĕн йатлă вара санăн?

— Петĕр йатлă.

— Вăт çапла, маттур. Каврил Петров тейĕпĕр сана. Мана Влатимĕр Миххалђђă теççĕ.

— Ма вăхăтра килмерĕн?, сана вађђи лайăх туска та йулмарĕ вăн — тет вăл ăна тускапа крихвĕђ парса.

Туски ђăнах та икĕ тĕлтен çурăлса кайнă.

— Ме тата линейккă сана — тет вăл йăваш

сасăпа,— тăрăшса аван вĕренсен çĕнĕ туска парăп.

Кавруç куншăн та хавас. Килне вĕçен кайăк пек вĕççе çитрĕ. Ашшĕ килте çук, амăшĕ çĕвĕ çĕлесе ларать. Шкулта мĕн курнине, мĕн калаçнине амăшне каласа кăтартрĕ.

Хĕл те çитрĕ, çиме пĕтсе килет. Тырă илме ĕнине сутрĕç, йўнĕ хакпах парса йаҕĕç;— сутакан нумай та, илекен çук.

Кавруç ăна илтсен виç кун йĕҕĕ, нимпе ҕарма çук.

— Ăçта хутăр ĕнене, тавайăр илсе килĕр ĕнене!— тесе тархаслать вăл ашшĕне.

— Çиме кĕскелҕĕ, тырă илме сутрăмăр аҕам — йăпатса калать ашшĕ.

Шкул инçе мар, Кавруçа çўреме аван. Вĕренме те—уҕитлĕ калать,—тăрăшса вĕренет тет.

Пĕрре шкултан таврăнсан ашшĕпе-амăшĕ йĕрсе ларнине курах кайать. Вĕсене курсан Кавруç та ĕсĕклесех йĕме тытăнҕĕ.

— Ес ма йĕрен тата?

— Хăвăр ма йĕретĕр?

— Есĕ йĕнĕ ҕух та култарса йарăн ывăлăм— тесе пуçне шăлать амăшĕ.— Ан йĕр куçу пăсăлĕ.

Çуркунне те çитрĕ, çырмара шыв кĕрлесе йухаť, пăр хускалнă, халăх кашни çулах пăр кайнă вăхăтра курма ђупаканђђĕ. Кăçал сасђĕв çук. Çынсем ђирле пуçларĕç, кашни пӳртре пекех ђирлĕ çын ахлатса выртаť. „Тиф“ ђирĕ теççĕ.

Кавруç ашшĕ çиђĕ пăт ырашла лашине те сутса йађĕ. Çăнăх çине мăйан вăрри хушма пуçларĕç — çинĕ ђух „çăтăр-çăтăр“ тăваť. Тĕсĕ те хупхура — тăпра пек.

Йалта çынсем вилкелени те палăра пуçларĕ, пĕр çын, ик çын вилет, хăш кун пиллĕк-ултта та çитет.

— Тиф, тиф пĕгерет халăха,

Пĕр кунĕ Кавруç амăшĕ те пуç ыратаť теме пуçларĕ. Тепĕр кунне тăрайми пулђĕ, вырăнпах выртаť.

— Сутмалла марђђĕ ĕнене, васкаса сутрăмăр, сĕтпе тăрантса пурăннă пулĕђђĕ, ах, ах,— ахлатса выртаť Петĕр арăмĕ.

— Нуша суттарђĕ, нуша, ху та сут терĕн, ђарăнса тăмаллађђĕ иккен — тесе куђанаť Петĕр.

Кавруç та ăнланма пуçларĕ, вăл та пурнăç нађарланнине сисет. Шкула çӳрет çапах та, анђах шкула вĕренме çӳрекенсем те сахалланђĕç.

Ваҫук вилнĕ теҫҫĕ. Йулашки вăхăтра „ҫав вилнĕ“ текен хăрушă сăмах ђас-ђас илтĕнме пуҫларĕ. Кавруҫ та вар ыратнипе аптăрама пуҫларĕ. Тăвата кун шкула кайаймарĕ. Амăшĕ нађарланнăҫемĕн нађарланат—калаҫайми пулђĕ.

— Анне тăр, ма йалан выртан — тет вара, Кавруҫ шкултан таврăнсан амăшне — тăр анне!

— Ђирлĕ вăл, тăраймаст, кай тух урама! выђа... — тет ашшĕ ăна.

Ҫук, Кавруҫăн ĕлĕкхи пек выђаса ҫӳрес килмест, пĕртте кăмăл каймаст.

— Ах, ах, Петĕр, шыв пар, шыв ĕҫес килет тесе йăнăшат Кавруҫ амăшĕ. Пĕрмай шыв ĕҫет, нимĕн те ҫимест, ĕҫет анђах.

— Мĕн пулђĕ сана анне? — ҫыпăҫат ђас-ђасах Кавруҫ. Ма пĕрте ҫиместĕн?

— Тиф теҫҫĕ... ывăлăм, тиф ђирĕ лекрĕ ылттăнăм, темĕн ђĕрлĕймĕп, апађĕ те... мăйан ҫеҫ, ах — йăнăшат амăшĕ. Аллисене тытма ҫук вĕри, шăмми ҫеҫ йулнă, паллама та ҫук амăшне...

Пĕр ирхине йăхран вăрансан Кавруҫ ашшĕ йĕрсе ларнине курат. Вăл тăнине курсан куҫĕсене шăлкаларĕ те ђарăнђĕ йĕме.

Тепĕр кунне амăшне ҫĕнĕ йешђĕк ăшне

ђиксе таçта илсе кайрĕç, „тупăк“ теççĕ çав йешђĕке.

Çаплах килеймерĕ амăшĕ—çухалђĕ.

— Вилђĕ—теççĕ. Ђирĕнђен ђĕрлеймерĕ. Ун хыççăн Вирук ђирлерĕ, вăл вара ерне хушшинђе вилсе кайрĕ.

— Ну Кавруç ађам, пурнăç пит нађара йулђĕ—çиме пĕтрĕ, мăйан та çук, терĕ пĕрре Кавруçа ашшĕ. Аннӳ те вилђĕ, Вирук та вилђĕ. Епĕр иксĕмĕр çеç тăрса йултăмăр. Пире те ђерет çитет пуђ, килте вилиђђен çул çинђе вилер... айта тухса утăпăр ăçталла та пулин—терĕ вăл Кавруçа ыталаса. Тумтирĕсене суткаласа пĕр кунĕ ирех иккĕн тухса утрĕç. Çуртне хупса, хăмапа çапса хăварђĕç.

III

Канаш стантсинђе пĕр пысăк, тăвата урапаллăскер кăшкăрса тĕтĕм кăларса çӳрет. „Правус“ теççĕ хăйне. Пĕрре кăна та мар. Акă пĕри таврана йантратса Канаш стантсине пырса ђарăнђĕ, хыçне темђул пӳрт пек те мар, тăваткăл, ултă урапалă йапаласем çаклатса йанă, çавсене таçтан сĕтĕрсе килђĕ.

— Ту-ту-у-ту-у!!! кăшкăртаť пĕтĕм таврана йантратса—Ту-ту-у!!!

Кавруç хăранипе хăлхине аллипе хуплаť. „Пуйăс килђĕ“ теççĕ. Ашшĕ Кавруçа пĕр алăк уçса кĕртсе йађĕ. Вакун тулли ађа, — ђăваш ађисем. Вĕсен хушшинђе майралла тумланнă хĕрарăм çемçен, калаçса çӳрет. Матренă Ваççилйĕвнă тесе ђĕнеççĕ ађасем.

— Акă манне те илсе кайăр, çиме çук, ађа шел, хам вилсен те хуйхăрмастăп, ађана çăласђĕ — тет Кавруç ашшĕ çав майралла тумланнă ђăваш хĕрне — Кавруç йатлă, ман йат Петĕр, Каврил Петров — сакăр çулта, Раштавра тăххăр тултараť — терĕ те Кавруçа ыталаса йĕпе питне сĕртĕнтерсе хытă ђуптурĕ.

— Ну еп нађђас... лавккана çăкăр илме кайап, — терĕ вăл Кавруçа та, ђупса тухрĕ вакунтан. Кайран „килсе ĕлкĕреймерĕ“, пуйăс текенни хытă кăшкăртса хускалса кайрĕ.

Йĕрсен йĕрсен Кавруç ђарăнђĕ йĕме. Матренă Ваççилйĕвнă ӳкĕтлет, йăпатса çăкăр касса пађĕ. „Аçу пире хăваласа çитет вăл“ тет Кавруçа вырăн тупса парса. Вакунта ађасем хĕвĕшеççĕ, Матренă Ваççилйĕвнă вĕсене çиме парса, тирпейлесе çӳрет.

Пуйăс кĕмсĕртетет анђах. Пырсан пырсан — ту-ту-у!!! тесе кăшкăртса йараť те канма ђарăнаť. Стантсăран вĕретнĕ шыв илсе кĕреççĕ.

Пуйăс татах кăшкăртса йарат̆ те, хускалса кайат̆. Çын пек ăслă вăл, шыв илме ђарат̆, шыв илсе килсенех хускалса кайат̆. Кавруç тĕлĕннĕ çавăнтан.

— Йепле туртат̆ вăл çавăнђул сынна? тесе ыйтаççĕ ађасем Матренă Ваççилйĕвнăран— уђђитĕлниттсă ăнлантарса каласа парат̆. Кавруç та тĕлĕнсе итлесе ларат̆.

— Пăспа туртат̆ вăл, вырăсла ăна „пар“ теççĕ, пысăк хуласенђе савăтсем те, хапрăксем те çавăн пек „парпа“ ĕçлеççĕ. Машшина ĕçлеттерет. Акă епĕр Мускава çитсен, курăр-ха унта, кăтартма хамах илсе кайăп—тет вăл вĕсене хирĕç.

Ăнланакане ăнланат̆, ăнланманнисем ăнланаймаççĕ. Курмасăр ăçтан сасартăках ăнласа илĕн?

Ђўређерен пăхсан вăрăм йупасем (телекрам йупи теççĕ) тата уйрăмăн ларакан çуртсем „вĕлт“ туса çеç иртсе йулаççĕ.

## IV

Икĕ çул çурă пурăнђĕ Кавруç Мускав хулинђе. Вакунта пынисене пурне те пĕр çурта, (ађа çуртне) вырнаçтарђĕç. Шапшурă, çўллĕ çурт. Пĕренисем курăнмаççĕ, шалтан та шурă,

йапйака. Кăраççин çути çук унта. „Лектритсă“ теççĕ. Пĕр тўме пеккине пăрсанах пўрт çапçутă çутăлат. Таса, çемçе вырăн çине выртараççĕ. Апатне те пит аванне параççĕ. Каврус, ун пек тутлă апат нихçан та çисе курман. Ђирлисем те сывалма пуçларĕç, пĕри çеç сывалаймарĕ, — вилђĕ. Каврус та самăрђĕ, вулама, çырма, шутлама вĕренеççĕ, шкулти пекех, анђах шкултинђен авантарах. Матренă Ваççилйĕвнăран пуçне тата иккĕн вĕрентеççĕ, пĕр хĕр, тепĕри арçын, йалти Влатимĕр Миххалђђă майлă тумланнăскер, ăна ађасем „ťаťă Мишшă“ тесе ђĕнеççĕ, — ђăваш вăл хăй, ђăвашла та вĕрентет, Матренă Ваççилйĕвнă пекех йуратаť ађасене.

Ађасем хăйсем те пит йуратаççĕ. Çĕнĕ пурнăçа Каврус та ђас хăнăхрĕ. Ашшĕне аса илсен йĕрсе илет те, анђах нимĕн тума та çук. „Хăваласа çитеймерĕ“ çитнĕ пулсан унпа пĕрле тата авантарах пулнă пулĕђђĕ пурăнма. „Çиме çук“ тесе хашлатађђĕ, кунта çиме пур. Е-ех, курас килет çке хăш ђух ашшĕне!

Кунта унăн çĕнĕ йулташсем пур: Колђăпа Ваççă. Вакун çинђех туслашрĕ вĕсемпеле. Халђ ĕнтĕ пĕрмай пĕрле çўреççĕ, иккĕшĕ те йăваш, Колђи тата ытларах хитре. Каç çывăрма выртсан

та нумайђђен шăппăн, пăшăлтатса калаçса выртаççĕ.

Вунă çул курса çӳресен те, курса пĕтерес çук, Мускав хулинђи йапаласене, темĕн те пĕр пур унта. Çуртсем те йалти пӳртсем пек мар, улăмпа витни мар, хăма витнисене те курма çук унта, пурне те тимĕр витнĕ, çав тери çӳллĕ, пăхсан пуç çинђен çĕлĕк ӳкет, темиçе хутлă, йĕри тавра шав ђӳређе. Пурне те пекех ђултан тунă.

Пĕрре вĕсене трамвай текен йапалапа таçта илсе кайрĕç. Трамвай вăл пăравус майлах, хăй тĕллĕн кусакан йапала, анђах вăл електритсăпа çавăрнаť. Пит хытă „вĕçет“, пăравусран кăшт кăна йерипентерех. Вăт çавăнпа лартса кайрĕç ађасене. Кавруç каллĕ-маллĕ çеç пăхса пыраť. Алăпа тытса пымасан, тăма та, ларма та çук. Вăт Мускав хули те вара! Йепле ђаплă хула иккен вăл.

Çитсе ђарăнђĕç вĕсем те, пĕр сата илсе кĕђĕç вĕсене. Унта кĕрсен Кавруçăн куç-пуç пĕтĕмпех алђăрса кайрĕ. Мĕн кăна çук вăл сатра? Пĕтĕм тĕнђери тискер кайăксене, вĕçен кайăксене пухнă пуђ унта? „Соолокиђђĕски сат“ теççĕ вырăсла. Арăсланĕ унта, упи, кашкăрĕ, тилĕсем, тикăрсем... шутласа та кăларас

çук. Хăш-пĕрин кĕлеткисене кĕнеке çинђе курнăђђĕ, кунта вĕсем ђĕрĕ, утса çӱреççĕ. Усаллисене тимĕр решетке ăшне хупнă. Уписем ниçта кĕреймесĕр çӱреççĕ, каллĕ-маллĕ уткалаççĕ, хăшĕ-пĕри лăпкă выртаççĕ. Кунĕпе пăхсан та пурне те курса тухас çук. Вĕçен кайăксем тата? Темле тĕслисем те пур. Хăшĕ йурлаççĕ, хăшĕ кăшкăраççĕ, хăшĕ хитре, хăшĕ тĕссĕр, сăмси кукăр. Темĕн те пĕр пур ĕнтĕ, темĕн те пĕр! Упăтесем тата? (хăш тĕлте вĕсене маймăл теççĕ). Ĕрешетке ăшĕнђе темĕн те пĕр хăтланаççĕ, пур йапалана та, çын пек, аллипе тытса çийеççĕ. Пит-куçĕсем те çынăннĕ майлăрах.

Кайран ађа çуртне таврăнсан та нумайђђен пĕр-пĕринпе калаçрĕç. Хăш-пĕрин çинђен Матренă Васçийлĕвнă сатрах каласа ăнлантарса пађĕ.

Ашшĕне аса илсен вара: „Ех, атте курсан мĕн калĕђђĕ-ши“ тесе куљанаť Кавруç. Ну киле таврăнсан ăна каласа кăтартаť ĕнтĕ, итлесе кăна лар!!! Сатра курнисене те, хапрăкра мĕн курнисене те пĕтĕмпех каласа парĕ Кавруç!

Ђăнахах та йулашки вăхăтра киле йарасси çинђен калаçма пуçларĕç. Кам таврăнас текенсене уйрăм çписка турĕç.

— Епĕ те таврăнап киле, аттене курас килет, терĕ Кавруç киле йарас хыпара илтсенех. — Кайап епĕ те!

Киле ăсатмаллисене, малтан вĕр-çĕнĕрен тумтир пађĕç, паљта, поттинккă, çĕлĕк т. ыт те. Çул çине апат çимĕç, темĕн те пĕр хатĕрлерĕç.

V

Канаш стантсине çитсен çав кунах лашапа киле ăсатрĕç. Кўршĕ йал çынни тырăпа пынă, çавăн лаши çине лартса йађĕç. Çынни те пит ырă çын тата, çултăрăх калаçтарса килђĕ Кавруçа.

— Хм... çапла еппин, тĕлĕнмелле — тесе пуçне пăркаласа çеç пыраť вăл Кавруç каланине итлесе.

— Вăт Мускав те, ахалех Мускав — пуç хула тесе каламан çав. Но-о! ђуп хытăрах, Кавруç ашшĕне курасшăн! — Кăшкăрса йараť тилкепине турткаласа.

— Ну ăшăт мана, пĕр савăт лартан пуљ? Ађуна илсе килтĕм, кур-ха Кавруçна, куçлăхсăр паллайатни? — Терĕ вăл пўрте кĕрсенех.

Кавруçа курсан ашшĕ — тĕлĕнсе хытса кайрĕ.

— Ађам Кавруç ес мари? йепле çитрĕн ылттăнăм, тесе ыталаса ђуптурĕ — епĕ сана вилнĕ

пуљ тесе, шыраттарма хут йатӑм, ес хӑвах килсе çитрӗн — тесе типшӗм пиђӗ тӑрӑх йухакан вӗри куççулне шӑлкалаҭ.

— Мускав вӗлерети сана, Мускав вӗлерместь вӑл, вӑт кур ађӑна, калаçса пӑхха, тӑкаҭ кӑна вырӑсла, ђӑващла калаçма та, тӑван ђӗлхене те манман — тесе икӗ аллине пилӗкрен тытса пӑхса тӑраҭ, Кавруçа лартса килнӗ çын.

Кавруç та ђӑтаймарӗ, савӑннипе ӗсӗклесе йӗрсе йађӗ. Кайран Мускава йепле çитни çинђен, унта йепле пурӑнни çинђен тата мӗнмӗн курни çинђен пӗр кун кунӗпе каласа пађӗ. Канашран йепле çитнине те каласа кӑтартрӗ. Ашшӗ: „Йураҭ, аван, пит аван“ тесе пуçне сулкаласа лараҭ. Йураҭ, Совет влаçӗ прахмасҭ вӑл, ӑна епӗ ӗмӗр манас çук, — тет вӑл савӑннипе.

— Ес ма пымарӑн, ӑçта аташса йултӑн? тесе ыйтаҭ тата йулашкинђен Кавруç ӗлӗкхине аса илсе. — Епӗ кӗтрӗм-кӗтрӗм сана, кӗтсе илеймерӗм. Нађђас килеп терӗн çке? Йӗрсе пӗтрӗм — тет Кавруç пуçне лӑш ђиксе.

— Епӗ санран та ытла йӗтӗм пуљ ађам, йӗрсе супрӑм, анђах мана пыма май пулмарӗ çав, кайран ӗç тупрӑм. Киле таврӑнсанах куккурус кӗрпи пама пуçларӗç. Ну йурӗ

ҫăлăнса йултăмăр, тавта пуҫ Совета—тере вăл тепĕр хут—выҫă вĕлермерĕ. Ҫĕнне тухиђђен пурăнкаларăм... Кăҫал тырă аван пулђĕ, ҫитмелле. Аннӳпе Вирук пит шеђ. Вăхăтсăр вилсе кайрĕҫ, анђах нимĕн те тума ҫук, вăл пиртен килмест ĕнтĕ, усал ђир пулђĕ...

Кавруҫ тумне кăтартаť, куђђенеҫ те хăварнă ашшĕ вађђи, пĕр татăк кулађă йулнă.

— Кун пек тумтир, есĕ нихҫан та тăхăнас ҫукђĕ, килте пулсан, пушмакĕ вĕр-ҫĕнĕ вĕт —тыткаласа пăхаť ун пушмакне ашшĕ.

Кайран Кавруҫ йалти шкулта йулашки икĕ ҫулне ҫӳрерĕ те, пĕтерсе тухрĕ. Шкулта вĕреннĕ ђухах, Мускаври пек, пионер отређĕ пухрĕ, унта пит тăршса ĕҫлерĕ. Хаљ хăй вошаттăй, комсомола кĕнĕ. Ҫапла йĕркеллĕ ĕҫлесе ашшĕне савăнтараť. Тепĕр ҫул Шупашкара рапфака вĕренме кайасшăн.

— Нумай вĕренни усăллă, кирек хăҫан та кирлĕ пулаť вăл тет Кавруҫ.—Пурин те вĕренме тăрăшмалла!

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АСС
Абонем. ящ. № 25.

# ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ

**кăларнă йалхуçалăх çинђен çырнă кĕнекесене Канашри, Сĕнтĕр-Вăрринђи, Шупашкарти, Йетĕрнери макаçăнсенђе тата пур акĕнствăсенђе те илме пулаť.**

ШТРАНТ Д.

Çунатлă хĕрлĕ çар. (Пернатая красная армия) Стр. 24. Форм. 13×17 см. Цена 8 коп.

ШТРЕЙНБЕРГ.

Хресђенсене пуймалли тӳрĕ çул. (Прямой путь к крестьянскому богатству). Форм. 13×17 см. Стр. 58. Цена 20 коп.

ГРАЦИАНОВ.

Çум курăкне йепле пĕтермелле. (Борьба с сорными травами). Стр. 32. Формат 13×17 см. Цена 12 к.

ГАВРИЛОВ.

Ђăваш йалхуçайствине малалла йарасси. (Пути развития с.-х. в ЧАССР). Форм. 13×17 см. Стр. 96. Цена 36 коп.

КРУТОШИНСКИ.

Ушкăнлă хуçалăхсем çинђен мĕн пĕлмелле Цена 40 коп.

**Кăçал тата çак кĕнекесем çапăнса тухаççĕ:**

Практическое огородничество — 3 печ. листа
Женские огородные артели. 1 п/л.
Химия в сельском хозяйстве—3 печ. листа.
Хмелеводство — 2 печ. листа
ЛЕНИН. Йалхуçалăхне ушкăнлатасси çинђен

Хакĕ 15 пус.
Цена 15 коп.